# Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе

# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

38 (7463) № ✻ Ытлари кун, 2007 çулхи майăн (çу) 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Çак кунсенче пĕтĕм çĕршыв Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунине уявлать. Эпир тивĕçлипех паттăрлăх историйĕн страницисене уçса пăхатпăр, Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пурнăçĕсене панисене сума сăватпăр, ветерансене чыслатпăр. Майăн 9-мĕшĕ ĕмĕрлĕхех историе хăюлăхпа паттăрлăх тата патриотизм çĕнтерĕвĕн кунĕ пулса кĕрсе юлнă.

Пирĕн республикăри çĕршер пин çын çапăçу хирĕсенче Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ, тылра вăй-хала шеллемесĕр ĕçленĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ паян пирĕнпе юнашар çук ĕнтĕ... Вĕсен ячĕсем яланлăхах пирĕн асра.

Паян эпир ветерансем умĕнче вĕсене тав туса пуç таятпăр. Вăрçă çулĕсен терт-асапĕ сирĕн хулпуççи çине тиеннĕ, апла пулин те вăл сирĕн чун-чĕре хавалне тата çĕнтерӳ туртăмне хуçайман. Эсир – çĕнтерӳçĕсен ăрăвĕ, эпир сирĕн умра нихăçан тӳлесе татайми парăмра. Сирĕн паттăрлăх вăл Тăван çĕршыва юратнин, хастарлăхпа паттăрлăхăн тата хăюлăхăн уçă сăнарĕ пулса тăрать, унăн астăвăмне эпир ĕмĕрлĕхех упраса хăварма тивĕç.

Çĕре çити пуç таятпăр сирĕн умра, хаклă ветерансем! Сире пурне те ыр кăмăллăх, çирĕп сывлăх, телей тата ăнăçусем сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

## АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, САЛТАК АРĂМĔСЕМ, ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Тăван çĕршывăмăрăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 62 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир хаяр вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршывăмăрăн ирĕклĕхĕпе чысне, никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвартăр. Европăри нумай халăха фашизм пусмăрĕнчен хăтартăр. Этемлĕх историйĕнчи чи хаяр, чи хăрушă, чи аркатуллă вăрçăра Аслă Çĕнтерӳ туса, çитĕнекен ăрăва мирлĕ пурнăç парнелерĕр. Тыл ĕçченĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ырми-канми ĕçлени сĕмсĕр тăшмана çапса аркатма пулăшрĕ. Ĕмĕр татайми парăмра эпир сирĕн умăрта.

Эпир Тăван çĕршывшăн пуçĕсене хунă салтаксене ĕмĕрех асра тытатпăр, сума сăватпăр. Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксемпе тыл ĕçченĕсем умĕнче çĕре çити пуç таятпăр. Сирĕн паттăрлăхăра ăша хывса темиçе ăру çитĕннĕ. Малалла та çаплах пулĕ. Сирĕн паттăрлăхăрпа хăюлăхăр, вăй-халăрпа чăтăмлăхăр, пĕлĕвĕрпе пуян опытăр çитĕнекен ăрăва Тăван çĕршывăмăра юратма, унăн пуласлăхĕшĕн яваплăха туйса ӳсме пулăшаççĕ, ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Тавах сире Аслă Çĕнтерӳпе паянхи телейлĕ пурнăçшăн. Тăван çĕршывăмăр аталантăр, пуянлантăр тесе хамăртан килнине йăлтах тăвăпăр. Сирĕн пурнăçăра çăмăллатасси те пирĕн тивĕç пулса тăрать.

Хисеплĕ çыннăмăрсем! Сире çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх, вăрăм кун-çул сунатăп. Ăнăçупа телей сирĕн ачăрсемпе мăнукăрсен малашлăх çулне уçса пытăр. Çемйĕрпе тăванăрсен ăшши пурнăçра вăй-хал парса пыччăр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

## АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂН ХАКЛĂ ВЕТЕРАНĔСЕМПЕ ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире чи аслă уявпа – Çĕнтерӳ кунĕпе саламлатпăр.

Кăçалхипе 62-мĕш хут паллă тăватпăр ăна. Çулсем иртнĕçемĕн сирĕн паттăрлăхăрпа хăюлăхăра ытларах та ытларах хаклатпăр. Сирĕн ырă тĕслĕхĕр, чун çирĕплĕхĕпе Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чун-чĕрепе парăнни пире пурне те йывăрлăхра пĕрле пулмаллине кăтартса параççĕ.

Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, тăнăç та мирлĕ пурнăç сунатпăр. Тăван район, республика, пĕрлĕхлĕ Раççей аталанăвĕнче ӳсĕм хыççăн ӳсĕм пултăр.

**Пĕтĕм Раççейри “Единая Россия” партин**
**Муркаш районĕнчи уйрăмĕ.**




## Çĕнтерӳпе таврăннă салтак



***Муркаш ялĕнче пурăнакан Алексей Капитонович Капитонов Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсене çынсем каласа панă е кинофильмсем тăрăх мар, хăйĕн пурнăç опычĕпе пĕлет. Вăрçăн йывăр нуши-асапне вăл хăй тӳссе ирттернĕ. 86 çулхи ветеран малтанах 2-мĕш Белоруссi фронтĕнче 48-мĕш çар ретĕнче нимĕçсемпе çапăçнă, кайран вара понтон кĕперсем тăвакансен батальонĕнче разведчик пулнă.***

***Çапăçусенчи хастарлăхшăн Отечественнăй вăрçăн 2-мĕшпе 3-мĕш степень орденĕсене, «Хастарлăхшăн», «Сталинград патĕнчи çапăçусемшĕн» медальсене, ятран панă сехете тата ытти наградăсене тивĕçнĕ.***

*Сăн ӳкерчĕкре: вăрçă ветеранĕ А.К. Капитонов.*

## Район уй-хирĕсенче

Хуçалăхсем акмалли вăрлăхăн 31 процентне (1210 тонна) имçамланă пулсан, ку ĕçе Ильич яч. хис., Ленин яч. хис., “Сеятель” ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче 100 процент пурнăçланă.

Кĕрхи культурăсене районĕпе 1643 гектар çинче (50 процент) апатлантарнă.

Нумай çул ӳсекен курăксене 3148 гектар (25 процент) апатлантарнă, 6648 гектарĕ çинче (54 процент) нӳрĕк тытнă.

“Герой” хуçалăхра 52 гектар, “Рассвет” агрофирмăра 50 гектар, Чапаев яч. хис. хуçалăхра 15 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем акнă.

Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче 10 гектар (50 процент), Чкалов яч. хис. хуçалăхра 5 гектар (100 процент) выльăх кăшманĕ акнă. Ку культура кăçал районĕпе 239 гектар пулмалла.

## Çур аки – 2007

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРХИ АКА-СУХА ĔÇĔСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ (ÇУ УЙĂХĔН 8-МĔШĔ ТĔЛНЕ)**

**Колонкăсенче: 1. Çĕр улми яровизацилеме кăларнă. 2.Кĕрхи культурăсем çинче нӳрĕк тытнă. 3. Акма çĕр хатĕрленĕ. 4. Çурхи культурăсем акнă (процентпа).**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е.Андреев яч. хис. | 100 | 18 | 3 | 36 |
| “Волга” | 100 | 0 | 37 | 35 |
| “Восток” | 100 | 28 | 87 | 67 |
| “Герой” | 86 | 100 | 40 | 41 |
| “Агро-Урожай” | – | – | 0 | 0 |
| К.Иванов яч. хис. | – | – | 13 | 9 |
| Ильич яч. хис. | 59 | 90 | 48 | 53 |
| “Колос” | – | – | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 25 | 46 | 35 | 30 |
| “Лидер” АФ | 24 | – | 3 | 0 |
| “Дружба” АФ | – | – | – | – |
| “Оринино” | 100 | 100 | 34 | 32 |
| “Передовик” | 100 | – | 8 | 4 |
| “Свобода” | 100 | 100 | 22 | 19 |
| “Сеятель” | – | 100 | – | – |
| Суворов яч. хис. | 48 | 71 | 10 | 0 |
| “Рассвет” АФ | – | 100 | 34 | 44 |
| “Нива” АФ | – | – | – | – |
| “Ударник” | 43 | 29 | 10 | 8 |
| Чапаев яч. хис. | 100 | 0 | 22 | 23 |
| “Чемеево” | 100 | 100 | 21 | 13 |
| Чкалов яч. хис. | – | 100 | 44 | 41 |
| ДаАн | 100 | – | – | – |
| Михайлов КФХ | – | – | – | – |
| Матвеев КФХ | – | 69 | 40 | 0 |
| Сретинский КФХ | – | – | 14 | 0 |
| Бархаткин КФХ | – | – | 12 | 58 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **73** | **58** | **19,7** | **19,3** |

## Аслă Çĕнтерĕве халалласа

# Кулленех тимлĕх уйăрмалла

***Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 62 çул çитет. Районта ăна хатĕрленсе ирттерме ятарлă ĕç планĕ хатĕрленĕ. Ăна район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов алă пусса çирĕплетнĕ, пур ял тăрăхĕсене те çитернĕ. Çак паллă куна халаллана мероприятисем халĕ малалла пыраççĕ. Мĕнлерех шухăш-кăмăлпа кĕтеççĕ черетлĕ Çĕнтерӳ кунне районти вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсем? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçинчен Н.П. ПЕТРОВАРАН.***

**– Нина Пантелеевна, миçен вĕсем паян районта пире çак мирлĕ пурнăça çĕнсе илсе парнеленĕ паттăрсем?**

– Шел пулин те, çулсем иртнĕçемĕн вĕсен йышĕ сахалланса пырать. Паян районта Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем 179-ăн, вăрçăра вилнĕ салтак мăшăрĕсем 39-ăн, тыл ĕçченĕсем 2467-ĕн, ĕç ветеранĕсем 5396-ăн.

Çакна палăртмалла, çĕршывăмăр аслă ăрури çынсене тĕрлĕ çăмăллăхсем парать. Ĕç ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсем республика шайĕнчи, вăрçă участникĕсемпе вăрçăра вилнĕ салтак арăмĕсем Раççей шайĕнчи çăмăллăхсемпе усă кураççĕ.

**– Аслă Çĕнтерĕве 62 хут кĕтекен вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсемшĕн мĕнпе асра юлĕ кăçал çак уяв?**

– Малтанах РФ Патшалăх Думин председателĕн, “Единая Россия” («Пĕрлĕхлĕ Раççей») политика партийĕн лидерĕн Б. Грызловăн шухăшне аса илни вырăнлă. Кашни Çĕнтерӳ кунне пирĕн Аслă Çĕнтерӳ юбилейĕ пек ирттермелле. Ку чăннипех те çапла пултăр тесе тăрăшаççĕ те районта, ял тăрăхĕсенче. Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе вăрçăра вилнĕ салтаксен мăшăрĕсем, тыл ĕçченĕсем патне уяв умĕн РФ Президенчĕн В.В. Путинăн, ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн саламĕсем çитĕç. Çавăн пекех вăрçă участникĕсемпе вăрçăра вилнĕ салтаксен мăшăрĕсем район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн саламлă çырăвĕсене илĕç, вĕсенчен кашниех уяв парнисене тивĕçĕ. Çакна валли пурĕ 62 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Унсăр пуçне РФ Пенси Фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ урлă кашни вăрçă участникне 350-шар тенкĕ укçан уйăрнă. Майăн 9-мĕшĕнче пур çĕрте те уяв митингĕсем ирттеççĕ, вăрçă ветеранĕсемпе тăлăх арăмсене, тыл ĕçченĕсене чыслаççĕ.

Аслă Çĕнтерӳ 60 çул тултарнине халалласа вара районта ятарлă ĕç планĕпе килĕшӳллĕн пур çĕрте те тĕрлĕ мероприятисем ирттеççĕ. Социаллă ĕçченсем çӳлерех асăннă категорие кĕрекенсем патĕнче пулаççĕ, вĕсен пурнăç условийĕсемпе паллашаççĕ, вĕсене мĕнле пулăшу кирлине палăртаççĕ. Çакна палăртмалла, ку таранччен вăрçă участникĕсемпе тăлăх арăмсенчен, тыл ĕçченĕсенчен, ытти ватăсенчен пысăк ыйтусемех пулмарĕç. Районти сывлăх хуралĕнче тăракансем те ватăсен сывлăхне тĕрĕслесех тăраççĕ. Вăрçă участникĕсене мунчара тӳлесĕр çăвăнтараççĕ тата çӳç кастараççĕ.

Районти вĕрентӳ тата культура учрежденийĕсенче те вăрçă ветеранĕсемпе тĕл пулусем, вĕсен паттăрлăхĕ çинчен калакан куравсем ирттеççĕ, концерт программисем хатĕрлеççĕ.

Çĕнтерӳ кунне халалласа спорт мероприятийĕсем те чылай ирттеççĕ. Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче йăлана кĕнĕ тăрăх В. Шалтыков парнисене çĕнсе илессишĕн велоспортпа ăмăрту пулать.

Уяв умĕн пур çĕрте те территорие тирпей-илем кĕртес ĕçсем туса ирттернĕ. Йывăç лартасси те малалла пырать. Ку ĕçсенче “Единая Россия” партин “Çамрăк гварди” обществăлла организаци членĕсем, шкул ачисем уйрăмах хастар пулчĕç.

Чи кирли кунта - çак ĕçсем вăхăтлăха çеç ан пулччăр. Пире мирлĕ пурнăç парнеленĕ аслă ăру çыннисене тимлĕх уйăрасси пирĕн кулленхи ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăмалла.

**– Тавах, Нина Пантелеевна, каласушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

## Майăн 12-мĕшĕ – Медицина сестрисен кунĕ

### Саламлатпăр

***Муркашри тĕп больница администрацийĕпе профсоюз комитечĕ Медицина сестрисен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе Муркаш районĕнчи сывлăх хуралĕнче вăй хуракан медсестрасемпе фельдшерсене чун-чĕререн саламлаççĕ, малашне те тăрăшса ĕçлеме, ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума вăй-хăват, ырлăх-сывлăх сунаççĕ.***